ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012

# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: www.put-pobedy.cap.ru

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ • 2012 çул • авăн/сентябрь/ уйăхĕн 26-мĕшĕ • юн кун • 115 /10584 № • Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Шкул çулĕччен вĕрентӳ ĕçченĕсен кунĕ

УВАЖАЕМЫЕ РАБОТНИКИ ДОШКОЛЬНЫХ УЧРЕЖДЕНИЙ!

Отдел образования и молодежной политики администрации Вурнарского района поздравляет вас с Днем дошкольного работника!

Вы учите детей знаниям, добру, способности творчески мыслить. Вы, как никто другой, знаете, что личность и только личность преобразовывает мир. Общество доверяет вам самое дорогое – своих детей, а значит, – будущее России.

Низкий вам поклон, дорогие дошкольные работники, за ваш нелегкий труд! Желаем вам дальнейших успехов на профессиональном поприще, благополучия, крепкого здоровья, мира и согласия, целеустремленных и благодарных воспитанников.

**Прекрасные люди сегодня
в почете,
Кто малых ребят окружает
заботой,
Кто учит читать свой
первый слог,
Дошкольный работник пусть
будет здоров!**

***Н.ИВАНОВ,*
*начальник отдела образования и молодежной политики администрации Вурнарского района.***



## Ачасемшĕн чунне пама хатĕр

**Ольга Ильинична Печникова паян хăйĕн пурнăçне ачасемсĕр курмасть. Тĕрĕсех ĕнтĕ, 35 çул кунсерен кĕçĕннисем çумĕнче пулсан, вĕсем уншăн темрен те хаклă ĕнтĕ. Маларах вăл поселокри 1-мĕш ача садĕнче тăрăшнă, халĕ 32 çул ытла – Вăрнарти «Сеспель» ача садĕнче.**

«Коллектива туртса пыракан çын», – терĕ ун пирки Вăрнарти «Сеспель» ача сачĕн ертӳçи Елена Филипповна Васильева. Ахальтен мар. Ольга Ильинична нумай çул аслă воспитательте тăрăшнă. Ертӳçĕшĕн – хаклă пулăшуçă, ĕçтешĕсемшĕн – хаклă юлташ.

Ольга Ильинична паянхи пурнăçшăн çав тери кирлĕ енпе – ачасене пурнăç хăрушсăрлăхне тарăннăн вĕрентессипе – тимлет. Ятарлă проектпа иртекен занятисене ытти ача сачĕсенче ĕçлекенсем те çитсе курнă, мал опыта лайăхпа хакланă. Тĕп тимлĕхре – çынсем хушшинче, килте пĕччен чух, пурнăçăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче кĕçĕннисене хăйсене тытма вĕрентесси. Педагогăн ку енĕпе çитĕнӳ те пур. Темиçе çул каялла çулйĕр хăрушсăрлăхĕ енĕпе 6-мĕш садик республикăра иккĕмĕш вырăн та йышăннăччĕ.

«Сеспель» ача сачĕ пĕтĕмпе 33 çынна пĕрлештерет. Шкул çулне çитмен 156 ачана пуçламăш пĕлӳ никĕсне хывма 12 воспитатель тăрăшать.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

## Стартра – 856 çын

Нацисен кросне районта ирттерме пуçланăранпа унта хутшăнакансен шучĕ икĕ хут ӳсрĕ: пĕрремĕшĕнче, 2009 çулта, стартра 450 çын тухнăччĕ, кăçал вара – 856 çын!

**ФОТОРЕПОРТАЖ**

**«Химик» стадионри трибунăсем кĕрлесе кăна тăчĕç – массăллă чупăва хутшăнакансем йышĕнче тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем пулчĕç. Чи кĕçĕнни Катя Леонтьева – виççĕре, чи асли Георгий Никишов – çитмĕлте. Яланхиллех районти тĕп больницăра ĕçлекенсем маттур пулчĕç. Кăçал вĕсем уйрăм забегра старт илчĕç.**

**Нацисен кросне, çăннипе, кăçал педагогсем усрĕç, пĕтĕм çĕршыв старт иличчен икĕ сехет маларах вĕсем эстафетăра вăй висрĕç.**

3-мĕш стр.



**ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ**

## Тырă вырса пĕтерни

Йĕпе-сапаллă çанталăка пула уй-хир ĕçĕсене пурнăçлама йывăр. Тырă вырас ĕç те вăраха кайрĕ. Иртнĕ эрнере районта тинех юлашки лаптăксем çинчен пĕрчĕллĕ культурăсене пухса кĕртрĕç. Район администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, 12983 гектартан 28928 тонна тырă çапса илнĕ, çав шутра тулă – 10400 тонна, урпа – 17769. Районта вăтам тухăç – 22,3 центнер. Кăтарту Карл Маркс ячĕллĕ, «Санары», «Победа», «Янгорчино», «Юнтапа», «Луч», «Хорнзор», «Знамя», «Мураты», «Агрохмель» ял хуçалăх организацийĕсенче, А.Игнатьев, М.Тарасов, В.Павлов, М.Максимов фермерсен хуçалăхĕсенче тата пысăкрах.

## Çĕр улми уйĕнче

Авăн уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне «иккĕмĕш çăкăра» 825 гектар çинчен пухса кĕртнĕ. Ку вăл планăн 53,4 проценчĕ. Карл Маркс ячĕллĕ кооперативра, «Аникра», «Колосра», В.Яковлевпа И.Сергеев фермерсен хуçалăхĕсенче çĕр улмине палăртнă лаптăксем çинчен йăлтах пухса илнĕ. А.Игнатьев фермер хуçалăхĕнче ĕçе 93 процент, «Победăра» 90 процент, «Агрохмельте» 76 процент пурнăçланă.

## Пулас тухăçшăн тăрăшса

Кĕр тыррисене районти аграрисен 5625 гектар акмалла. Çак вăхăта плана 58 процент пурнăçланă е пулас тухăç никĕсне 3265 гектар хывнă. Кĕр тыррисене «Броневик», «Хорнзор» кооперативсенче акса пĕтернĕ.

Е.ТИКИНЕВА.

Районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата çырăнтарас тапхăр пырать

2013 ÇУЛХИ ПĔРРЕМĔШ ÇУР ÇУЛ ВАЛЛИ РАЙОН ХАÇАТНЕ ХАЛЬХИ ХАКПАХ ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ:

почта урлă илсе тăма – 199 тенкĕ те 80 пуспа, редакцие килсе илмелле – 120 тенкĕпе.

ЕНЧЕН ТЕ ЭСĔ РАЙОНТА ПУРĂНАН Е ĔÇЛЕТĔН ПУЛСАН, АН ЮЛСАМ ПУРНĂÇРАН – «ÇĔНТЕРӲ ÇУЛНЕ» ÇЫРĂНСАМ!

**ÇАНТАЛĂК**

Кĕçнерни кун 27.09
кăнтăрла +12
çĕрле +4

| | Эрне кун 28.09 | Шăмат кун 29.09 |
|---|---|---|
| кăнтăрла | +14 | +15 |
| çĕрле | +13 | +10 |

*«Метеоновости» ИА информацийĕ тăрăх*

